# Раиса Сарпи

РАИСА САРПИ (Раиса Васильевна Бородкина–Яковлева) 1951 çулхи кăрлачăн 2-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхаль ялĕнче çуралнă.

Нăрваш Шăхалĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчи чăваш уйрăмне пĕтернĕ. Сăвăсем çырма ачаранах пуçланă. Пĕчĕккисем валли те, аслисем валли те çырать. 20 кĕнеке авторĕ.

Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ тата Пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк халăхĕсен Нежип Фазыл ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк çамрăкĕсен VIII-мĕш фестивалĕн лауреачĕ. Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен эстрада юррисен «Кĕмĕл Сасă» III фестиваль-конкурсăн «Чи лайăх поэт» ятне илме тивĕç пулнă (2002 ç).

Раиса Сарпи – Раççей писателĕсен союзĕн членĕ.

***

Этемлĕх çийĕн хĕç тăрать çакăнса...
Хĕç ӳксен татăлса,
Этемлĕх выртĕ кăнса...
Кам çакнă çак хĕçе?
Этемлĕх – хăй!
Хĕç ӳкĕ кĕçех –
Чармасан Ырă Вăй.
Этемлĕх пурнăçĕ –
Этемлĕх аллинче.
Айван этемлĕх
Шутламасть кун çинчен.
Хăйне хăй пĕтерӳ –
Этемлĕх пуçĕнче...
Пурнать этемлĕх иртĕхсе-ĕрĕхсе:
Паян пултăр ĕçмелли, кӳпмелли,
килентĕр...
Варлать уçлăха – тав-шава пĕрĕхсе...
Этемлĕхре çук этеплĕх – таву, ĕненӳ...
Эп – çакна калакан –
Этемлĕхе çăлма тăракан.
Ан пул, этемлĕх, ухмах, таракан!
Чарăн, урма-ахăрма!
Ан тивтĕр сана макăрма!
Вилĕм – сывлан сывлăшу!
Наркăмăш – çимĕçӳ, аш-пăшу!
Сыхла хăв килне – çут çанталăка!
Сыват хăв чунна – ĕмĕрлĕх палăка!
Пис вăрçăран! Хур ан ту хăвна!
Пусар хăвăнти вĕчĕрхенчĕк тăвна!

***

«Ах! та «ах»! тесе çеç çӳрес пур,
Пурăнас та çук çут тĕнчере!
Курмаллах этемĕн хура-шур,
Унсăрăн аталанмасть чĕре.
Асапа çĕнсе, этем, йăл кул!
Хуть хăçан та савăнăçлă пул.
Шырасассăн кукăр, çăмăл çул,
Ырлăх сĕнмĕ пурăнăç – кун-çул...

### ПУР!

Пур чăвашра чăн-чăн арçынсем, пур!
Кăвар чĕреллĕ, сисĕмлĕ, маттур!
Чăваш йăхне кăшларĕ-ватрĕ мур,
Çапах та чăвашра чăн-чăн
арçынсем пур!

Хĕрарăм хул пуççийĕ çийĕнче
Ларсассăн та асаплă çут тĕнче,
Çут ĕнчĕ çиçнĕн хăйăр хушшинче
Пур – ĕненетĕп! – чăваш арĕ çĕр çинче.
Чăн-чăн чăваш арçынĕ пулнăран,
Ăна чунтан, савса, юратнăран,
Хĕрарăма хăратмĕ хура-шур.
Чăваш пики ĕçре вут пек маттур.

Пур чăвашра чăн-чăн арçынсем, пур!
Кăвар чĕреллĕ, сисĕмлĕ, маттур!
Вĕсене курма çеç пĕлмелле!
Вĕсене савма çеç пĕлмелле!

### ЧĔНӲ

Эй, чăваш ывăл-хĕрĕ,
Тăван чĕлхешĕн хĕвелле çунăр!
Эй, чăваш ывăл-хĕрĕ,
Юратăр, çуратăр, хунăр!
Эй, чăваш ывăл-хĕрĕ,
Хĕвеллĕхпе тултăр сирĕн чунăр!
Тусăрсене, тăванăрсене ырă çеç
сунăр, –
Вара – вĕççĕр вăрăм пулĕ
сирĕн кунăр!..

### ЭПИР – ТУРĂРАН!

Эй, çĕр çинче пурнакан этемсем,
Эпир пурте пĕр аттепе пĕр аннерен
çуралнă.
Уйăх çинчен çĕр çине турăсем евĕр
аннă,
Çĕр чĕрçинче этемсем
пулса аталаннă...
Эпир упăтерен пулман.
Эпир – Турăран!
Пĕр-пĕрне курмасан, илтмесен,
туймасан,
Пĕр-пĕрне тăванла савмасан,
Упăте пулĕ çынран!..

***

Поэт юратăвне тивĕçнисем –
Ĕмĕрлĕх-вилĕмсĕрлĕхе вĕçнисем
Пулаççĕ Вĕççĕрлĕх-пуласлăхра,
Мухтавлăхра, хăватлă Аслăхра.

***

...Пĕрисем килеççĕ сăвăсем çырма...
Теприсем килеççĕ... вĕсене çурма...

### ВИЛСЕН ТЕ УСĂЛЛĂ ПУЛАСЧĔ

Вилсен те усăллă пуласчĕ,
Хĕвел пулса çӳлтен куласчĕ.
Хам халăха ялан куласчĕ,
Хам халăха ялан юрасчĕ.
Чун ăшшине ăна парасчĕ,
Чун çутине ăна ярасчĕ.
Эпир кашни – хĕвел хĕлхемĕ.
Турă ачи – чăваш этемĕ.
Чăваш чĕлхиллĕ турăсем
Çут тĕнчене кӳнĕ илем.
Кам иккенне эпир манман.
Çӳл тӳперен ахаль анман.
Турăсенчен илнĕ пехил,
Çĕр чăмăрне тума ЫРКИЛ.

### ПОЭТ ПУЛАС ТЕСЕН

Поэт пулас тесен этем пулмалла.
Таса ĕмĕт-кăмăлпа тулмалла.
Хĕвел пек сутă чунлисем кăна
Çӳлелĕхе çĕклеççĕ Ăс-тăна.

Поэт тени вăл чуххăм лаша мар
Пар-парлатса инçе çула чупма.
Вăл йывăр лав мĕкĕрленсе туртать,
Ун майĕнчен пурнăç чыс-çăк уртать.

Çав чыс-çăка çӳле çĕклес тесен,
Уямалла поэтăн пур тĕсе,
Асамата та ун асамлама,
Çич тĕслĕ тĕс тупса асăмлама
Хăюлăх та, хăват та тупмалла,
Хайне анчах хăюллăн шанмалла.

Шав малалла, шав малалла утма,
Çынсен чунĕсенче хĕлхем сутма
Ун хайĕн Прометейăн çунмалла,
Шануллăн Çĕн куна ăнтăлмалла.

Асап килсен ăна çĕнтермелле.
Тĕрĕслĕхе çынна пĕлтермелле.
Кĕрлеттерсе, хăюллă сасăпа,
Юрламалла хĕвеллĕ касăпа!

Асапсене çĕнсе тасалсан çеç,
Уя-хире тухса чунсем вĕçеç!
Чун вĕçмесен поэт пуласси çук!
Поэт пулсан чеен куласси çук!

Чеелĕхе поэзи юратмасть.
Чееленсе поэт чун хуратмасть!
Поэзи çуралать вут-кăварта!
Пĕтĕленет, ача пек, чун-варта!
Поэт пулас тесен этем пулмалла!
Ыр ĕмĕт-кăмăлпа çеç тулмалла!

### *КАШНИ КУРĂКА...*

Кашни курăка, чĕр чуна, этеме
Чунăм ăшшипе
супăрлассăм-ăшăтассăм килет.
Кашни курăка, чĕр чуна, этеме
Чĕрем çут телей, юрату пехиллет.
Эй, Турă!
Тавах сана мана юратма вăй панишĕн,
Хĕвел пек, чуна юрату вырнаçнишĕн.
Кашни курăка, чĕр чуна, этеме
Юратма пултарнишĕн,
Турăлла туйăмпа ăш-чике
тултарнишĕн

Хама калама çук телейлĕ туятăп,
Самантсерен, усламçă евĕр, путăп.
Пуянлăхăма усламçалла çич çăра
хыçне пытармастăп.

Çичĕ алăк хыçне çынсенчен, çук,
тармастăп.

Юрату – юрату çуратать!
Чунăм сад пахчинче çут-шевле
чечексем, тусăм, тат!
Сан валли çитĕнтертĕм вут-сад.
Эй, этемсем, эп сире юрататăп!
Юрататăп.
Эппин, сăвăсем татах çурататăп...

### *ВĔРЕНТЕКЕНЕ*

«Вĕрен! Вĕрен! Вĕрен!» – текен
Хĕвел чунлă Вĕрентекен.
Пуçа тайса сан умăнта,
Сана мухтасшăн эп чунтан.

Эс маншăн ĕмĕрех сумра.
Çут сăнару ялан умра.
Сан аллунта – Пĕлÿ Тĕнчи!
Çутатăн эс ăс-тăн ĕнчи!

Чун-чĕрене хăват паран,
Çĕклетĕн çăлтăрсем таран!

Вĕрентекенĕмĕр, пире
Кĕтсе илсе кашни ирех,
Пĕлмесĕр ывăнма-ырма,
Вĕрентрĕн вулама-çырма.

Тăван атте-анне пекех
Эс тăрăшрăн куллен, текех
Сăваплă çын тума пире,
Хистерĕн сыхлама мире.

Эс ыр сунса вĕрентнĕрен,
Ыр кăмăлпа тапать чĕре.
Хисеплесе тăван çĕре,
Ыр ят тупасшăн тĕнчере.

Вĕрентекен, сана пула
Куллен илет вăй ял-хула.
Çыравçă, агроном, артист
Кÿрет сана мухтав та чыс.

Эс пехилленнĕ Ăс-мулпа
Уататпăр пурнăçри çулпа,
Ялав пек, Çутă Шанăçа
Çĕклер, пĕлмесĕр Канăçа!

«Вĕрен! Вĕрен! Вĕрен!» – текен
Хĕвел чунлă Вĕрентекен,
Пуçа тайса, сан умăнта
Сана мухтатăп эп чунтан!

### *ТĂВАН ÇĔРШЫВ*

Тăван çĕршыв – тăван анне –
Пĕртен-пĕрре çут тĕнчере.
Чунтан савса Чăваш Ене,
Хĕрÿллĕн тапать пин-пин чĕре.

Чечеклен чăваш тĕнчи –
Хĕвел тĕнчин сÿнми ĕнчи.

Хĕвел тĕнчин ытамĕнче
Çĕклентĕр хавал чăваш çĕрĕнче.

Асаттесен пехилĕпе,
Атте-аннен çут пилĕпе
Малашлăха хăюллăн утар,
Чăвашлăха хастаррăн упрар.

***

Укçашăн, чапшăн чунна ан сут!
Суялăх-нишлĕх лаприне ан пут!
Чун – ĕмĕр-ĕмĕр сӳнми вут.
Чунна ыр ĕçшĕн, тусăм, çут!

### *ÇӐЛ ТӐПЕНЕ ПĂХСА КАЛАНĂ САМАХ*

I

Çитмĕлех те ту та çичĕ ту:
Ула ту, Урар ту, Чике ту...
Алтăр Çăлтăрпала калаçса,
Урлă тăраканпа çураçса
Чăнкă тусем урлă каçрăмăр,
Çакăнта килсе вырнаçрăмăр,
Эй, мĕскер кăна курмарăмăр...
Шеллесем çак халăха, Çăлаканăмăр.

II

Çитмĕлех те уй та çичĕ уй:
Хура уй та Вил уй, Чипер уй...
Пушă хирсен шăрăхне чăтса,
Сĕм вăрмансен чăтлăхне уçса
Ахрат çырми урлă каçрăмăр,
Çерем касса тымар ятăмăр,
Йăмрапала хăмла лартрăмăр...

Уясам çак халăха, Çăлаканăмăр.

III

Çитмĕлех те халăх, çич халăх,
Чее, кăра халăх, уç халăх...
Атте-анне ятне упраса,
Пĕр ăруран тепри тытăнса
Улăпсем хыççăн утрăмăр,
Çитмĕл халăх витĕр тухрăмăр,
Чăвашах та тĕнчи турăмăр...

Ан пăрах çак халăха,
Çăлаканăмăр.

## Николай Ершов-Янгер

Николай Гаврилович Ершов (литературăри псевдонимĕ – Янгер) 1942 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Янкас ялĕнче çуралнă.

Тăван ялти пуçламăш, Красноармейскинчи вăтам шкулсенче, партин Аслă шкулĕнче пĕлӳ илнĕ, çарта офицер пулнă.

Красноармейскинчи Культура çурчĕн илемлĕх ертӳçи, Çĕнел Упири библиотека заведующийĕ, Шалти ĕçсен районти пайĕнче паспорт службин пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Райхаçат редакцийĕнче вăй хунă тапхăрта литература сотрудникĕ, яваплă секретарь, ял хуçалăх тата парти пурнăçĕн пайĕсен ертӳçи, редактор çумĕ пулнă.

Пĕрремĕш хайлавĕ 1956 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче район хаçатĕнче кун çути курнă. Сăввисемпе тĕрленчĕк-очеркĕсем «Малтанхи хунавсем» (1972), «Пурнăç сăпки» (1992), «Пурнăç сакки» (2006), «Çулсем иртеççĕ» (2002), «Пурнăç илемĕ» тата «Пурнăç элемĕ» (2007) кĕнекисенче пичетленсе тухнă.

Вун икĕ çул районти çыравçăсен Нестер Янкас ячĕллĕ литературăпа искусство пĕрлĕхне ертсе пынă. Халĕ – унăн хисеплĕ председателĕ. 1990